# Хуран кукли



Ĕçе пурнăçлаканĕ:

Прокопьева Мария,
Шупашкар хулинчи
43-мĕш вăтам шкул
вĕренекенĕ, 5 класс

Ертӳçисем:

Соколова Т.А.,
Соколов С.Ю.

# Хуран кукли –
# пирĕн çемьен юратнă апачĕ



**Эпир аннепе пушă вăхăтра хуран кукли çупма юрататпăр. Ытларах чухне ăшне тăпăрчă хуратпăр. Çуллахи вăхăтра хуран куклине çырларан туса çиетпĕр.**

# Кирлĕ хатĕрсем





**Чуста çăрма:**
**500 гр. çăнăх**
**2 çăмарта**
**Çур литр шыв**
**1 чей кашăкĕ тăвар**

**Ăшне хума:**
**Çур кило тăпăрчă**
**500 гр. симĕс сухан**
**1 çăмарта**

# Чуста çăратпăр





**Малтан чуста çăратпăр.**

**1. Çăнăха ала витĕр кăларатпăр.**

**2. Унтан çăмарта, тăвар, çу, шыв ярса лайăх çăратпăр.**

# Пĕçĕрме хатĕр



**Лайăх çăратпăр, ывăç сине хурса унаса çемçететпĕр**



**Чуста хатĕр те.**

# Чуста хатĕр



Чуста хатĕр те.



Ăшне хума тăпăрчă, симĕс сухан, çăмарта хатĕрлетпĕр.

# Кукăль ăшне хатĕрлетпĕр



Сухана тăпăрчăпа, çăмартапа лайăх кăна хутăштаратпăр.

Чустана йĕтĕрлесе саратпăр.



# Кукăль çупатпăр



Çаврашкасем касса кăларатпăр.



Çаврашка варрине маларах хатĕрленĕ хутăша хуратпăр

# Мĕн тери тутлă!





1. Кукăль кантрине пӳрне тăррипе чĕпĕтсе хитрен яватпăр.
2. Çак илĕртмĕшсене кăшт тăвар янă шыва ярса пăспа пĕçеретпĕр.
3. Пиçнĕ кукăльсене дуршлаг çине илсе хумалла, шывĕ сăрхăнтăр.

Пиçнĕ кукăльсене услам çу е хăйма ярса çиеççĕ

# Апачĕ тутлă пултăр!

**Хуран куклине чăвашсем пысăк уявсенче хăна умне лартса панă**

